ХЫПАР

1999 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

21 (818) №, 2015, май/çу, 28 Хакĕ ирĕклĕ

12+

ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/майăн 27-мĕшĕ тĕлне/

Килограмм	тенкĕ
ПАХЧАÇИМĔÇ	
Çĕрулми	20-25
Купăста	35-40
Сухан	35-40
Кишĕр	45-50
Ыхра	170-200
Хăяр	70-130
Хĕрлĕ кăшман	40
Помидор	80-130
Пылак пăрăç	100-180
Тăварланă хăяр	120-150
Йăçĕтнĕ купăста	120
ПАХЧАÇИМĔÇ КАЛЧИ	
Помидор калчи /10 шт/	80-100
Купăста -»-	40
Хăяр -»-	100
Кавăн /кабачок/ -»-	100
Пылак пăрăç -»-	100
Çĕрулми вăрлăхĕ /кг/	17-19
Сухан /севок/	80-120
УЛМА-ÇЫРЛА	
Панулми	50-120
Иçĕм çырли	120-200
Апельсин	70-120
Лимон	80-120
Банан	65-75
Мандарин	70-120
Гранат	80-120
ÇĂНĂХ-КĔРПЕ	
Тулă çăнăхĕ	29
Вир кĕрпи	32
Хура тул -»-	56-60
Тулă -»-	25
Манна -»-	30
Рис -»-	56-59
Пăрçа	30
* * *	
Сахăр песукĕ	44-46
Пыл	350-400
АШ-КАКАЙ	
Ĕне ашĕ	200-350
Сысна ашĕ	200-350
Сурăх ашĕ	200-350
Пĕвер	140-180
Пӳре	70-80
Чăх	180-200
Салă	100-150
* * *	
Çăмарта /теçетке/	48-62
ПУЛĂ	
Шăнтнă скумбри	200
-»- сельдь	140
Мойва	160
Горбуша	300
Шăла пулă	180-250
Çупах	100
Карп	180-200
Çуйăн	200-250
Çăрттан	150
СĔТ-ТУРĂХ	
Сĕт /литр/	35
Хăйма	200
Тăпăрч	180-200
Сыр	200-300
Услам çу	200

Йывăç кĕлĕ усăллă

Чылай пахчаçă килте экологи тĕлĕшĕнчен таса пахчаçимĕç çитĕнтерме тăрăшать. Химисĕр çитĕнтернĕ çимĕç тути те техĕмлĕреххине палăртаççĕ çынсем. Çав хими препарачĕсене мĕнпе улăштарма май пуррине нумайăшĕ пĕлмест. Çавăнпах çутçанталăк панă паха удобрени тепĕр чухне ĕçе кĕреймест.

Йывăç кĕлнех илер-ха, тĕслĕхрен. Кил-тĕрĕшре нумай хуçа пахчара йывăç-тĕм каснă хыççăн туратсене çӳп-çап купине пăрахать. Типĕ туратсене çунтарсан вара питĕ паха удобрени тума пулать.

Кĕлре 30 яхăн усăллă элемент пур: магни, тимĕр, кали, кальци, кремни, фосфор, бор, марганец т.ыт.те. **Çакнашкал пуянлăх нихăш удобренире те çук!**

Нумай ӳсен-тăраншăн сиенлĕ хлор вара унра çук! Çавăнпа ăна пахчаçимĕç лайăх йышăнать. Çĕрулми, хăяр, баклажан, купăста, пăрăç, кăшман, çĕр çырли, крыжовник, хăмла çырли, слива, хурлăхан, улмуççи, груша.

Кĕлре, паллах, чылай курăк-йывăçшăн усăллă азот та çук. Азот йывăç çуннă чухне тĕтĕмпе вĕçсе саланать.

Йывăç кĕлĕ йӳçек те йывăр тăпрашăн лайăх. Компоста сапсан вăл ăна хăвăртрах çĕрме пулăшать. Тăпрана кĕлпе пулăхлатни хĕл каçакан культурăсен тӳсĕмлĕхне ӳстерет. Çуркуннехи калча та кĕл шывĕпе шăварсан лайăхрах вăй илет, куçарса лартсан хăвăртрах чĕрĕлет.

Кĕл калипе фосфор хутăшăллĕ чылай удобренирен пахарах. Тĕслĕхрен, иçĕм турачĕпе çĕрулми çеçкин кĕлĕнче кали 40 процента яхăн. Çавăнпа асăннă чĕртавара çӳп-çапа тухса пăрахни пысăк йăнăш. Пахчара типĕтмелле те çунтармалла – кали удобренийĕ хатĕр те.

Тăпрана кăпкалатнă май хывнă кĕл 2-4 çул хушши усă кӳрсе тăрать. Унăн витĕмлĕхĕ тĕрĕс тата кирлĕ вăхăтра усă курнипе те çыхăннă. Кĕле йĕпетме юрамасть. Ăна типĕ çĕрте полиэтилен хутаçра упрамалла. Шывпа йĕпетсен унти кали тата хăшпĕр микроэлементсем çухалаççĕ.

Пахчари тăпра мĕнле пулнине кура кĕле çĕре хывассине тĕрĕс йĕркелемелле. Тăпра тăмлă, йывăр пулсан ăна кĕркунне хывни лайăхрах, тăпра хăйăрлă, торфлă пулсан – çуркунне.

Азотлă тата фосфорлă удобренисемпе пĕрле кĕле çĕре хывма юрамасть. Ăна тислĕкпе хутăштарса та сапма юрамасть. Тĕслĕхрен, тислĕке тăпрана кĕркунне хывмалла, кĕле – çуркунне.

Калча лартнă чухне кĕл ытлашши нумай сапма юрамасть. Хăяр, кабачок, кавăн лартмашкăн шăтăка пĕр чĕптĕм кĕл сапмалла та тăпрапа хутăштармалла.

Помидор, пăрăç, баклажан лартмашкăн çур ывăç кĕле тăпрапа хутăштармалла.

Купăста /тĕрлĕ сортсем – брокколи, брюсель е чечекли/ – пĕр чĕптĕм.

Хурлăхан тĕмне çуркунне пĕр стакан кĕл кирлĕ. Ăна тăпрана кăпкалатнăçемĕн сапмалла.

Кишĕр, кăшман, петрушка та кĕл сапнă тăпрара лайăхрах çитĕнеççĕ. Çĕрулми валли кашни кăка пĕрер ывăç кĕл юрать.

Хăшпĕр пахчаçă вăрлăха акас умĕн кĕл шывĕнче тытма сĕнет. Пĕр литр шыва икĕ апат кашăкĕ кĕл ярса пăтратмалла, пĕр талăк лартмалла. Унтан сăрăхтармалла та сĕлтĕ шывĕнче акмалли вăрлăха 4-6 сехет тытмалла.

Кĕл ӳсен-тăран чирĕсемпе, кăпшанкăсемпе кĕрешме пулăшать. Хура тымар, шурă янкар /мучнистая роса/ тата ытти кăмпăска чирĕнчен, уй пăрçинчен, уй пыйтинчен /тля/, сухан лĕпĕшĕнчен хӳтĕленме пулăшать. Ӳсен-тăрана каçкӳлĕм е ирхине типĕ кĕлпе вĕçтерсе сапмалла. 1 тăваткал метра 1 стакан кĕл çитет.

Кĕл пахалăхĕ мĕнле йывăça çунтарнинчен те килет. Çулçăллă йывăça çунтарнă кĕлре кальци нумай. Лăсăллă йывăça çунтарсан фосфорлă кĕл пулĕ. Иçĕм вуллийĕ, утă-улăм çунтарнă кĕлре кали нумай.

Топинамбур, хĕвелçаврăнăш тунисене лайăх типĕтсе çунтарсан паха кĕл пулать. Юман кĕлĕн сĕлтипе улма-çырла йывăçĕсене шăварсан çимĕçсем çирĕп пулаççĕ. Çĕрĕк чирне питех парăнмаççĕ. Пĕр литр банкине тултарнă кĕле пĕр витре шыва ямалла, пăтратмалла. Талăкран çак сĕлтĕне 1:2 виçепе шывпа хутăштарса улмуççине шăвармалла. Улмуççи йĕри-тавра 1-1,5 метрта 10-15 см шăйрăк тумалла та унта кĕл шывне ямалла. 3-4 витре шыв янă хыççăн шăйрăка хупламалла.

Çĕр кăмрăкĕ /каменный уголь/ çунтарса пулнă кĕл ӳсен-тăраншăн усăллă мар.

Хисеплĕ вулакансем!
«Хыпарпа» /798,06 тенкĕ/ «Хыпар – эрнекун» /345,54 тенкĕ/ хаçатсене çырăнма васкăр!
«Кил-çурт, хушма хуçалăх» – çур çула – 228,90 тенкĕ.

Халăх сăнанинчен

- *Çу уйăхĕн вĕçĕнче вăрăмтунасемпе ӳпресем тухаççĕ. Вăрăмтуна нумай пулсан çырла лайăх пулать, ӳпре нумай – кăмпа валли пурак хатĕрле.*
- *Çак уйăхăн 28-мĕшĕнче çанталăк ăшă тăрсан çулла ăшă пулмалла.*
- *Çирĕк кăчки нумай – урпа ăнса пулать.*
- *Çĕртме уйăхĕ çулталăклăх тыр-пул ӳстерет.*
- *Чăрăш йĕкелĕ нумай – хăяр лайăх пулать.*

Çимĕк – Троица

Кăçал Çимĕк ир килет: çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче. Ĕлĕк чăвашсем Çимĕк уявланă. Çулла пуçламăшне, тĕнче чĕрĕлсе ешернине, çурхи ĕçсем вĕçленнине палăртакан уяв пулнă вăл. Чăвашсем Православие йышăннă майăн Çимĕк Троицăпа пĕрлешсе кайнă. Троица христанствăри вуникĕ сумлă уявсенчен пĕри. Ăна Мăнкун /Пасха/ хыççăн 50 кунран уявлаççĕ.

Библи тăрăх Çеттуй Сывлăш пилĕ Христос апостолĕсем çине шăпах 50 кунран аннă. Çавна май Турăн виççĕмĕш сăпачĕ – Çеттуй Сывлăшĕ – çынсене курăннă. Турăн виççĕлле пĕрлĕхĕ – Ашшĕ, Ывăлĕ, Çеттуй Сывлăшĕ халăха палăрнă. Çав кунранпа – апостолсене Çеттуй Сывлăш пилленĕренпе – çĕр çинче сăваплă Троицăна палăртаççĕ.

Чиркӳсенче çак кун уяв кĕлли иртет. Çынсем çуртсене тирпейлеççĕ, тĕрлĕ курăкран милĕк туса мунча кĕреççĕ. Çакă этем те Çеттуй Сывлăшпа тасалса çĕнелнине, ĕненӳре çирĕплене шантарнине пĕлтерет.

Кун мĕнпе паллă

Çу, 28 – Пограничник кунĕ.

Çу, 29 – Европăн кӳршĕлĕх кунĕ. 2000 çулта Парижра çирĕплетнĕ. Çак кун хамăр хушăри çынсен пурнăçĕпе кăсăкланассине кӳршĕ-аршăпа хутшăнса тĕрлĕ йывăрлăха лекнĕ çынсене пулăшассине йĕркелемеллине астутармашкăн палăртнă.

Çу, 31 – Троица. Çимĕк кунĕ. Пĕтĕм тĕнчери табак туртассине хирĕçлемелли кун. Табаксăр кун. Химик кунĕ.

Çĕртме, 1 – Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун.

Вулакансем ыйтнипе

Ылтăн модăран тухмасть

Ывăлăма çуралнă кунĕ тĕлне ылтăн вăчăра парнелесшĕн. Халĕ вĕсем модăра-и?

Людмила К.

Ылтăн япаласем нихăçан та модăран тухмаççĕ пулĕ. «Çивĕтлесе» ăсталанисем уйрăмах илемлĕ курăнаççĕ. Хулăнах мар икĕ вăчăра çакни те килĕшӳллĕ, хăйнеевĕрлĕ ярапапа /подвеска/ пулсан пушшех те лайăх, тĕслĕхрен, ятăн пĕрремĕш саспаллийĕ, Зодиак палли тата ыт. те. Çакна шута илмелле: тĕн символики ярапа-эреш шутланмасть, ăна кăтартма кирлех мар?

Портландцемент

Халĕ хуçалăх лавккисенче тĕрлĕ цемент сутаççĕ. Пире портландцемент çинчен тĕплĕнрех каласа памăр-ши?

Роман КАРНАКОВ.
Шупашкар.

Хальхи вăхăтра промышленноç 10 тĕрлĕ ытла цемент туса кăларать. Çурт-йĕр тунă чухне портландцементпа анлă усă кураççĕ. Унăн тĕсĕ кăвак-симĕс. Пĕр кубла метр кăпăш цементăн йывăрăшĕ – 900-1100 кг. Ăна минералсем хушса тата вĕсемсĕр, 400, 500, 550 тата 600 маркăсемпе хатĕрлеççĕ. Марка хисепĕ мĕн чухлĕ пысăкрах, цемент тата унпа хатĕрленĕ раствор е бетон пахалăхĕ те лайăхрах. Çурт-йĕр лартнă чухне пĕчĕк маркăллă цементпа усă курни çителĕклĕ. Портландцемент сывлăшра та, шывра та пĕр пек çирĕп хытать. Цемент мĕнле хăвăртлăхпа хытасси сывлăш температуринчен нумай килет. Ăшăрах чухне раствор е бетон хутăшĕ хăвăртрах çирĕпленме пуçлать. Температурăна чакарсан вара цемент часах хытмасть. Çакна та палăртса хăвармалла: стандартпа килĕшӳллĕн сывлăш температури 20 градус ăшă пулсан цемент 45 минут иртсен çирĕпленсе ларма пуçлать. Çавăнпа та ку йышши цементран хатĕрленĕ раствор е бетон хутăшĕсене 1-2 сехет иртиччен усă курмалла. Кăтартнă вăхăт иртсен çакнашкал хутăшсем усă курма юрăхсăр.

Хĕвеллĕ тата шăрăх кунсенче хатĕрленĕ бетон çийĕ çуркаланать. Çапла ан пултăр тесен ун çине нӳрлĕ пăчкă кĕрпи сапмалла е вăхăтран-вăхăт шывпа пĕрĕхмелле.

Василий ИВАНОВ, инженер-строитель.

Реклама
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Пĕлтерӳ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

«Алатар»: уничтожает 28 видов садовых и огородных вредителей!

«Алатар» — это универсальный препарат, он эффективен против множества вредителей (плодожорок, белянок, совок, листоверток, тлей, боярышницы, медяницы, листоблошек, белокрылок, растительноядных молей, долгоносиков, пилильщиков, луковой и морковной мухи и т. д.). Защитит от вредителей большинство садовых и огородных культур (капусту, морковь, лук, грушу, яблоню, крыжовник, малину, землянику, цветы, декоративные кустарники и т. д.). «Алатар» наносит по вредителям двойной удар, так как содержит сразу два действующих вещества: малатион и циперметрин. Он успешно подавляет даже устойчивые популяции вредителей и обладает синергическим эффектом. В садовой аптечке «Алатар» должен быть обязательно как первейшее средство неотложной помощи при неожиданном нападении вредителей.

На правах рекламы

ĔÇ РАБОТА

372.В Нижегородскую область требуются: разнорабочие – грузчики, фасовщицы, слесари, сварщики; на с/х предприятие – животноводы, пастухи, рабочие в теплицу, механизаторы. Вахта. Проживание предоставляется. Оплата от 20 тыс. руб. Т. 89061336772 /ООО «Славия»/.

Çанталăк

Кун тăршшĕ

	кăнтăрла	çĕрле
28.05	+ 27	+20
29.05	+ 29	+20
30.05	+ 31	+21
31.05	+ 29	+21
01.06	+ 28	+19
02.06	+ 21	+15
03.06	+ 23	+13

	Уйăх	кунĕ
28.05	16.56	11 у.к.
29.05	16.59	12 у.к.
30.05	17.02	13 у.к.
31.05	17.04	14 у.к.
01.06	17.07	15 у.к.
02.06	17.09	16 у.к.
03.06	17.12	17 у.к.

Кун тăршшĕ 17 сехет те 12 минут пулать, 10 сехет те 12 минут вăрăмланать.

Кăткăран хăтăлма

Пахчара кăткă ытлашши ĕрчесе кайни пахча тухăçне палăрмаллах чакарать. Кăткă хăй çеç мар, уй пыйтине /тля/ ĕрчетме те ăста.

Кăткăсем ытларах çеремленнĕ çĕрте пурăнаççĕ. Тăпрана кăпкалатса тăрсан, паллах, вĕсем урăх çĕрелле куçса вырнаçаççĕ. Йăвана ялан çĕмĕрсе тăни кама килĕштĕр?

Йывăççене кăткăран хӳтĕлемешкĕн çăра извеç хутăшĕ пулăшать. Йывăç вуллине тата ун тавралли çĕре те извеçпе сăрламалла. Кăткă тĕмĕсене тĕппипе аркатмалла, унта извеçпе кĕл сапмалла.

● Кăткăна пĕтерес тесен ĕçе тĕрĕс йĕркелемелле. Кăткă курăк пыйтипе «туслă». Ăçта çав пыйтă – унта кăткă нумай. Çавăнпа курăк пыйтине те пĕрлех пĕтермелле.

● Кăткăсене петрушка, лавр, анăс курăкĕ, горчица, помидор çулçи, пилеш курăкĕ шăрши хăратать.

● Кăткă тĕмĕсене шыва краççын хушса /10 литр шыва 10 апат кашăкĕ краççын/ пĕрĕхмелле.

● Кăткă нумай пуçтарăнакан вырăна шывпа тип çу хутăштарса сапма юрать.

● Кăткă тĕмĕсене каçхине, кăткăсем йăлтах йăвине пуçтарăнсан тĕме салатса вĕрекен шывпа сапмалла.

● Йăрансем çинчи кăткăсене пĕтерме кĕл, извеç тата вĕтетнĕ йывăç хуппине хутăштарса сапмалла.

● Кăткă йăви тĕлне тĕтĕмленĕ селедка пуçĕ, помидор çулçи е петрушка çулçи хурса тухмалла. Кăткăсем çак шăршăсене тӳсеймеççĕ, тараççĕ.

● Помидор çеçкин отварĕ те хăратать. Пĕр ывăç çеçкене 5 литр шывра вĕретмелле, сивĕнсен кăткă йăвисем тĕлне пĕрĕхмелле.

● Армути шăршине те юратмаççĕ кăткăсем. Вĕсен çулĕсем çине армути çулçи хурса тухмалла.

● Пылак «капкăн» хатĕрлеме пулать: çур литр шывра çур чей кашăкĕ бор йӳçекне /борная кислота/, пĕр апат кашăкĕ сахăр песукĕ ярса лайăх пăтратмалла, пĕчĕк савăтсем çине ярса кăткă çӳрекен çĕре лартмалла. Çак хутăш патне пымашкăн савăт хĕрне улăм пĕрчи е курăк туни хурса памалла.

● Апат кашăкĕ çĕпрене сивĕ шывпа хутăштарса хăйма пек тумалла, чей кашăкĕ варени хушмалла. Çакна картун татăкĕсем çине сĕрсе кăткăсем çӳрекен çĕре хумалла. Кăткă çак хутăша çиет те вилет.

Кăткăпа пĕрлех курăк пыйтине те пĕтермелле терĕмĕр. Çакна валли вĕри шыва кĕл тата армути ярса лартмалла. Пĕр-икĕ кун тытмалла та курăк пыйтиллĕ ӳсен-тăрана пĕрĕхмелле. Кăткăсем юратнă апачĕсĕр юлаççĕ, ĕрчеслĕхĕ те чакать.

Çутçанталăк ытамне тухсан

Сарделька

Çутçанталăк ытамне тусюлташпа пĕрле тухсан пурте шашлăк хатĕрлеме хăнăхнă. Эпир сĕнекен апат та шашлăкран пĕрре те кая мар.

Сарделькăсене тăрăхла касмалла, кашнин çине пĕр татăк сыр тата помидор касăкĕсем хумалла. Вĕсене çу сĕрнĕ решетке çине вырнаçтармалла, вĕри кăмрăк çийĕнче ăшаламалла, вăхăтран вăхăта решеткесене çавăрмалла. Çунтарса ярасран асăрханмалла. Шурă соуспа питĕ тутлă.

Соус хатĕрлеме хăймапа майонеза хутăштармалла, вĕтетнĕ укроп сапмалла. Вĕтетнĕ 1-2 шăл ыхра хушсан та лайăх.

Салат-саккускă

Пĕçернĕ 2 çĕрулми, сухан, шăмминчен тасатнă селедка, 2 апат кашăкĕ майонез, 1 хăяр /чĕрри/, салат çулçисем.

Хăяра, сухана турамалла, селедкăна пĕчĕк касăксем туса касмалла. Салат çулçисемпе тата майонезпа сийĕн-сийĕн хумалла. Çĕрулмипе, укроппа çиеççĕ.

Тăпăрчпа, редиспа

150 грамм тăпăрч, 2 шăл ыхра, кăштах укроппа петрушка, пĕчĕк хăяр, 4 касăк ыраш çăкăрĕ, 4 апат кашăкĕ ӳсен-тăран çăвĕ, 2 редис, тутине кура хура пăрăçпа тăвар кирлĕ.

Ыхрана, укроппа петрушкăна вĕтетмелле. Хăяра çумалла, пĕр хăяр çуррине çӳхе касăксем туса касмалла. Ыттине тăваткалласа турамалла, тăпăрчпа, ыхрапа, ешĕл çимĕçпе хутăштармалла, пăрăçпа тăвар сапмалла. Çăкăра ӳсен-тăран çăвĕнче кăштах ăшаламалла, редиса çаврашкан-çаврашкан турамалла. Кашни касăк çине тăпăрч хутăшне хумалла, хăярпа редис çаврисемпе илемлетмелле.

Кукăль

200 грамм тăпăрч, 75-шер грамм хытă тата çемçе йышши сырсем, 1-ер çăмартапа помидор, 160 грамм çăнăх, 100 грамм услам çу, 70 грамм хăйма, тăвар, ӳсен-тăран çăвĕ кирлĕ.

Услам çу ирĕлтермелле, çăнăхпа хăйма хушмалла, çемçе чуста çăрмалла. Формăна пергамент сармалла, ӳсен-тăран çăвĕ сĕрмелле. Чустана сармалла. Кукăль ăшлăхĕ валли тăпăрча теркăпа хырнă сырпа хутăштармалла. Çăмарта шуррине сарринчен уйăрмалла, шуррине кăпăшлантармалла та кукăль ăшлăхне хушмалла. Помидора çӳхе касăксем туса касмалла, чуста çине хумалла. Çăмарта саррине кăпăшлантармалла, кукăле сĕрмелле. Духовкăра 185° температурăра 30-40 минут пĕçермелле.

Пăшăрхану

Пӳртпе юнашар вите лартма юрамасть

"Ялта пирĕн 15 сотка çĕр пур, ăна пире 1990 çулсенче панă. Унта эпир пӳрт лартнă. Пахчара веçех туса илетпĕр. Çулла ялта пурăнатпăр /май уйăхĕнчен пуçласа сентябрь вĕçĕччен/, хĕлле – хулара. Çуллахи вăхăтра ачасем те мăнуксемпе килсе çӳреççĕ. Анчах ялта, пӳртре çывăрма, пахчана тухма та питĕ шăршлă. Мĕншĕн тесен пирĕн пӳртпе юнашар чикĕре кӳршĕсем икĕ çул ĕнтĕ чăхсем усраççĕ. Вĕсен енчен çил вĕрсен вара пушшех те сывлама май çук...

Чăхсем усрамалли вырăн вĕсен пӳрчĕ патĕнчен 10-15 метрта. Вĕсем те пирĕн пекех хĕлле – хулара, çулла ялта пурăнаççĕ. Вĕсем хăйсен çурчĕпе юнашар туман-çке читлĕхе. Хăйсен шăршă шăршлас килмест, пирĕн шăршламалла..."

Çакнашкал кӳренӳллĕ çыру килнĕччĕ редакцине. Ăна эпир Чăваш Республикин ветеринарипе фитосанитари тĕрĕслевĕн управленине ярса патăмăр. Çыру тăрăх Ветеринари служби тĕрĕслев ирттернĕ. Хисеплĕ çыру авторĕ, тĕрĕслев хуравне сире те ярса панине пĕлтерчĕç.

Мĕншĕн пурпĕрех пичетлес терĕмĕр-ха сирĕн çырăва. Çакнашкал кӳренмелли ĕç-пуç сахал мар тĕл пулать-ха пирĕн хушăра. Паллах, кӳренӳ сăлтавĕ кӳршĕсем пĕр чĕлхе, çураçу тупма пултарайманнинче. Шел, пĕр-пĕрне хисеплесси, çын интересĕсене уясси пирĕн халĕ те кирлĕ шайра теемĕн. Паллах, çын çурчĕ çумне вите лартса хуни пачах та ырламалли япала мар. Санитари йĕркипе те килĕшсе тăмасть.

РФ Ялхуçалăх министерствин 03.04.2006 çулхи "Граждансен килти хуçалăхра тата уçă вырăнта чăх-чĕп ĕрчетекен хуçалăхсенче ветеринари йĕркине çирĕплетесси" /"Об утверждении ветеринарных правил содержания птиц на личных подворьях граждан и птицеводческих хозяйствах открытого типа"/ 103 № хушăвĕпе килĕшӳллĕн выльăх-чĕрлĕх витисене çуртпа юнашар лартма юрамасть.

Ялхуçалăхĕнче выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк ĕрчетме тăвакан вите-хуралтăна СанПиНăн 22.1/2.1.1. 1200-03 санитари талккăшне /зонине/ пăхăнса лартмалла. 7.1.11. пунктра килти хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх хуралтисем /сысна, ĕне, лаша витисем, питомниксем, ытти фермăсем/ 50 пуçа çитиччен тытмаллисем V класа кĕреççĕ. Çак йĕркепе санитари хӳтлĕхĕн талккăшĕ пурăнмалли çуртран 50 метр пулмалла. Выльăх-чĕрлĕх картине 1,6 м çӳллĕш хӳмепе пӳлмелле. Тислĕк хумалли вырăна та талккăшпех хӳмепе картламалла. Вăл çил вĕрекен енчен пурăнмалли çуртран 60 метр аяккарах пулмалла.

Витесенчи каяша вăхăтра тасатса тăмалла, хуралтăсене тирпейлĕ тытмалла. Тислĕке биометрика енĕпе сиенсĕрлетме тĕрĕс купаламалла. Тислĕке купара лайăх çĕриччен тытмалла /2-4 уйăх/.

Енчен те кӳршĕ е кирек кам та сирĕн интерессене уямасть, санитари нормине пăсать пулсан, асăрхаттарнине шута илмест-тĕк лару-тăрăва пăхса тухма маларах асăннă Ветеринари службине е Ветеринарипе фитосанитари службине ыйтса çырмалла е суда тавăç тăратмалла. Вырăнти администраци енчен те пулăшу ыйтма пулать.

Эльвира ИВАНОВА.

ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА

июнь, 1-7

1 тунтикун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
9.15, 4.05 Контрольная закупка 12+
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.05 Модный приговор
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.25, 15.15, 1.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ВЗРОСЛЫЕ ДОЧЕРИ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+

РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 «Загадка судьбы» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «МЕЖДУ НАМИ ДЕВОЧКАМИ» 12+
23.55 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
0.50 «Праздник тысячи подношений»
1.30 Т/с «Я ЕМУ ВЕРЮ» 12+
2.25 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-20» 16+
3.20 «Русский чернозем»
4.20 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.35-11.55 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «Солнечно. Без осадков» с Александром Беляевым 12+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Все будет хорошо!» 16+
15.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ИНСПЕКТОР КУПЕР-2» 16+
21.30 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.20 «Анатомия дня»
0.00 Т/с «ПСЕВДОНИМ «АЛБАНЕЦ» 16+
1.45 1.55 «Спето в СССР» 12+
2.55 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ОПЕРАЦИЯ «КУКЛОВОД» 16+
5.00 Т/с «МОСКВА. ТРИ

ЧĂВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

6.10 Анонс передач
6.15 События
6.27 Салтак пăтти
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Жемчужина Поволжья
7.33 Паянхи кун
7.37 Çула тухсан
7.51 Мы – вместе
7.58-8.00 Погода
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 От 2 до 5
18.29 Библия сегодня
18.39 Каçхи юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

2 ытларикун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.15, 4.15 Контрольная закупка 12+
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.15 Модный приговор
12.20, 21.35 Т/с «ВЗРОСЛЫЕ ДОЧЕРИ» 16+
14.25, 15.15, 2.20, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.25 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 «Структура момента» 16+

РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 «Загадка судьбы» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «МЕЖДУ НАМИ ДЕВОЧКАМИ» 12+
23.55 «Последний романтик контрразведки» 12+
0.50 «Московский детектив. Черная оспа» 12+
1.55 Т/с «Я ЕМУ ВЕРЮ» 12+
2.50 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-20» 16+
3.45 «Полиграф» 12+

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость /на чувашском языке/. Премьера
9.50-9.55 Вспомни, солдат /на чувашском языке/. Премьера
11.35-11.55 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «Солнечно. Без осадков» с Александром Беляевым 12+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Все будет хорошо!» 16+
15.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ИНСПЕКТОР КУПЕР-2» 16+
21.30 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.20 «Анатомия дня»
0.00 Т/с «ПСЕВДОНИМ «АЛ-

ЧĂВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Юрă çаврăмĕ
6.31 Певец земли чувашской
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă саламĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.23 Паянхи кун
7.27 Будьте здоровы
7.37 Вăрçă ачисем
7.47 Олимпийские горизонты
7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Остров молодых
18.39 Каçхи юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

3 юнкун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.15, 4.15 Контрольная закупка 12+
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.15 Модный приговор
12.20 Т/с «ВЗРОСЛЫЕ ДОЧЕРИ» 16+
14.25, 15.15, 2.20, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.25 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «МАМА-ДЕТЕКТИВ» 12+
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 «Политика» 16+

РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 «Загадка судьбы» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «МЕЖДУ НАМИ ДЕВОЧКАМИ» 12+
22.55 Специальный корреспондент 16+
0.35 «Последняя миссия. Операция в Кабуле» 12+
1.35 Т/с «Я ЕМУ ВЕРЮ» 12+
2.35 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-20» 16+
3.35 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.35-11.55 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «Солнечно. Без осадков» с Александром Беляевым 12+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Все будет хорошо!» 16+
15.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ИНСПЕКТОР КУПЕР-2» 16+
21.30 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.20 «Анатомия дня»
0.00 Т/с «ПСЕВДОНИМ «АЛБАНЕЦ» 16+
1.55 Квартирный вопрос 0+
3.00 Дикий мир 0+

ЧĂВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Хамăр ял
6.34 Имею право
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.23 Паянхи кун
7.26 Эра: экономика, расчет, анализ
7.37 Права потребителя
7.43-8.00 Ирхи концерт
* * *
12.10-13.00 Вăхăт ĉитрĕ. Тӳрĕ эфир
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Юрă çаврăмĕ
18.29 Будни ЖКХ
18.39 Чĕрĕ шыв
18.49-19.00 Вести-Чувашия

4 кĕçнерникун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.15, 4.15 Контрольная закупка 12+
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.15 Модный приговор
12.20, 21.35 Т/с «МАМА-ДЕТЕКТИВ» 12+
14.25, 15.15, 1.25 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.15, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 На ночь глядя 16+

РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 «Загадка судьбы» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «МЕЖДУ НАМИ ДЕВОЧКАМИ» 12+
22.55 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.35 Т/ф «Тайна трех океанов» 12+
1.45 Т/с «Я ЕМУ ВЕРЮ» 12+
3.40 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Волга – дело чести. Премьера
9.35 Военное детство
9.50-9.55 Дороги Чувашии
11.35-11.55 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «Солнечно. Без осадков» с Александром Беляевым 12+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Все будет хорошо!» 16+
15.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ИНСПЕКТОР КУПЕР-2» 16+
21.30 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.20 «Анатомия дня»
0.00 Т/с «ПСЕВДОНИМ «АЛБАНЕЦ» 16+
1.55 «Дачный ответ» 0+
3.00 Дикий мир 0+
3.15 Т/с «ЗНАКИ СУДЬБЫ» 16+
5.00 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

ЧĂВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Юхма енĕм – Патăрьел
6.31 Спорт площадки
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.22 Паянхи кун
7.27 Открытая студия. Прямой эфир
7.56-8.00 Юрă çаврăмĕ
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Шăнкăрав
18.49-19.00 Вести-Чувашия

5 эрнекун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.15, 5.10 Контрольная закупка 12+
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.20 Т/с «МАМА-ДЕТЕКТИВ» 12+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 Коллекция Первого канала. «Голос» Второй сезон. Лучшее
23.55 «Вечерний Ургант» 16+
0.50 Х/ф «ХОЗЯИН МОРЕЙ: НА КРАЮ ЗЕМЛИ» 16+
3.20 Х/ф «ВОСПИТАНИЕ АРИЗОНЫ» 16+

РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
9.50 «О самом главном»
10.45 Мусульмане
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 «Загадка судьбы» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
21.00 «Юморина» 12+
22.55 Х/ф «ЛЮБОВЬ НА ДВА ПОЛЮСА» 12+
0.50 Х/ф «ПТИЦА СЧАСТЬЯ» 12+
2.45 Горячая десятка 12+
3.50 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Наша республика. Главная тема
9.20 Семейный портрет в интерьере. Премьера
9.35 Профпортрет
9.45-9.50 Спорт сильных
11.35-11.55 Вести-ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «Солнечно. Без осадков» с Александром Беляевым 12+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 «Все будет хорошо!» 16+
15.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ИНСПЕКТОР КУПЕР-2» 16+
21.35 Х/ф «ОТДЕЛЬНОЕ ПОРУЧЕНИЕ» 16+
23.30 Т/с «ПСЕВДОНИМ «АЛБАНЕЦ» 16+
1.25 «Тайны любви» 16+
2.25 Дикий мир 0+

ЧĂВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Чăваш тĕнчи
6.35 Юрă çаврăмĕ
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.23 Паянхи кун
7.28 Из сводок МВД
7.38 Ăстаçă
7.48-8.00 Кăмăлтан. Ирхи концерт
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.25 Ăраскал
18.49-19.00 Вести-Чувашия

6 шăматкун

1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «ШКОЛЬНЫЙ ВАЛЬС» 12+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 Умницы и умники 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 Смак 12+
10.55 «Виктор Тихонов. Последний из атлантов» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «На 10 лет моложе» 16+
14.00, 15.15 Х/ф «ОБЫКНОВЕННОЕ ЧУДО»
16.50 «Кто хочет стать миллионером?»
18.15 «Угадай мелодию»
18.50 Коллекция Первого канала. «ДОстояние РЕспублики: Анна Герман»
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
22.55 «Танцуй!»
1.40 Х/ф «БЕЗ ПРЕДЕЛА» 16+
3.35 Х/ф «СУБМАРИНА» 16+

РОССИЯ 1

4.55 Х/ф «ПЯДЬ ЗЕМЛИ» 16+
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.20, 14.30 Местное время. Вести-Москва
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Освободители» «Саперы» 12+
11.30 «Кулинарная звезда»
12.35, 14.40 Х/ф «ПОСЛЕДНЯЯ ЖЕРТВА» 12+
15.10 Субботний вечер
17.05 «Улица Веселая» 12+
18.00 Х/ф «ЧЕТВЕРТЫЙ ПАССАЖИР» 12+
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «МОЯ МАМА ПРОТИВ» 12+
0.40 Х/ф «ХОЧУ ЗАМУЖ» 12+
2.40 Х/ф «ВСЕ НЕ СЛУЧАЙНО» 12+
4.20 Комната смеха

ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чăваш ен
10.05 Для вас. Любимые. Концерт по заявкам
10.30 Главная тема
10.40-11.00 Мехел. Республиканский конкурс детской чувашской песни. Гала-концерт. Премьера
14.30-14.40 Вести-Чувашия

НТВ

5.40 Т/с «ПЛЯЖ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 «Медицинские тайны» 16+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Поедем, поедим!» 0+
11.50 Квартирный вопрос 0+
13.20 «Я худею» 16+
14.15 Своя игра 0+
15.10 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
21.00 Ты не поверишь! 16+
21.30 Футбол. «Ювентус» (Италия) - «Барселона» (Испания). Лига чемпионов УЕФА. Финал
23.40 Х/ф «АНТИКИЛЛЕР ДК» 16+
1.35 «Виктор Тихонов» 12+
2.35 Дикий мир 0+

ЧĂВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

7.10 Вести-Чувашия
7.23 Анонс передач
7.25 Паянхи кун
7.31 Столичный курьер
7.42 С нами Бог
7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ
* * *
12.10 Точка роста
12.28 Юрă çаврăмĕ
12.32 Килте пĕçерер-ха
12.38-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ
* * *
18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тӳрĕ эфир

7 вырсарникун

1 КАНАЛ

5.40, 6.10 «В наше время» 12+
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.40 М/Ф «Самолеты»
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 Фазенда
12.15 «Теория заговора» 16+
13.15 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ» 16+
17.00 «Парк» Новое летнее телевидение
19.00 «Точь-в-точь» Лучшее 16+
21.00 Воскресное «Время»
22.30 «Что? Где? Когда?»
23.40 «Мистер и миссис СМИ» 16+
0.10 Х/ф «КОНТРАБАНДА» 18+
2.15 Х/ф «ЛЕДИ-ЯСТРЕБ» 12+
4.30 Контрольная закупка

РОССИЯ 1

5.15 Х/ф «ИСПЫТАТЕЛЬНЫЙ СРОК» 16+
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна 12+
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Россия. Гений места»
12.10 «Смеяться разрешается»
14.20 «Живой звук»
16.10 Х/ф «ПОДМЕНА В ОДИН МИГ» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.35 Торжественная церемония открытия XXVI кинофестиваля
1.50 Х/ф «ВОЛШЕБНИК» 12+
3.30 «Планета собак»
4.05 Комната смеха

ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

НТВ

6.05, 1.45 Т/с «ПЛЯЖ» 16+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.50 «Дачный ответ» 0+
13.20 «Тайны любви» 16+
14.20 Своя игра 0+
15.10 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа» с Кириллом Поздняковым
20.00 «Список Норкина» 16+
21.05 Х/ф «ОПАСНАЯ ЛЮБОВЬ» 16+
0.40 «М-1. Лучшие бои» 16+
3.35 Дикий мир 0+
4.05 Т/с «ЗНАКИ СУДЬБЫ» 16+
5.05 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

ТНТ

7.00 «ТНТ. MIX» 16+
7.35, 8.00, 8.30 М/с «Губка Боб Квадратные штаны» 12+
9.00, 9.30 Т/с «ДЕФФЧОНКИ» 16+
10.00 «Дом-2. Lite» 16+
11.00 «Сделано со вкусом» 16+
12.00 «Перезагрузка» 16+
13.00 М/ф «Делай ноги» 12+
15.05 М/ф «Делай ноги-2» 12+

ЧĂВАШ РАДИО «РАҪҪЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

7.10 Анонс передач
7.17 Паянхи кун
7.21 Столичный курьер
7.34 Здоровье
7.44 Çыравçăсем – ачасем валли
7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ
* * *
8.00-9.00 Между Волгой и Уралом
* * *
12.10-13.00 Кайри — мала. Хит-парад
* * *
18.10-19.00 Ылтăн çӳпçерен

ВИКТОРИЯ–ОКНА
МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ
НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
www.oknavdom21.ru
г. Чебоксары, ул. Гузовского, 17, «Салон мебели»
8 937 955-33-00 8 987 662-61-62
АКЦИЯ: по ценам 2014 года!

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
Изготовление в короткие сроки.
Гарантия качества
Скидки до 30 %
Тел. 89176594701.

КИРПИЧ
более 500 видов и цветов.
Газосиликатные блоки
ТК «ТЕРМИНАЛ».
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1,
тел. 30-55-15,
г. Новочебоксарск, ул. Промышленная, 41,
тел. 73-84-12.

РЕКЛАМА ПЕЛТЕРУ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пулĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

СУТАТĂП ПРОДАЮ

1.Качественную фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900р., прихожие от 3600р., шкафы от 3300р., комоды от 2300р., столы от 1000р., кровати от 4000р. Доставка, сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24. **Сайт:** www.ex-comfort.ru.

2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. Т. 8-960-307-31-51.

3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ, щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. Т. 8-960-307-31-51.

4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 8-987-576-65-62.

5.БЛОКИ керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные, заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, **документы.** Т. 8-960-301-63-74.

7.ГРАВМАССУ, песок, **щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

8.Гравмассу, песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит**. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.

10.Сетку-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

11.Срубы для бани. Т. 37-28-74.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг. Согнём** любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.

15.Кирпич, песок. Т. 8-961-339-33-63.

17.Песок, гравмассу, керамзит, чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

19.КИРПИЧ красный, силикатный, **гравмассу,** щебень, **керамзит,** песок, кольца, **к/б блоки.** Т. 8-927-862-91-66.

21.Керамблоки, гравмассу, песок. Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

23.Гравмассу, песок, бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, **копалки,** окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

26.КЕРАМБЛОКИ /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

27.Красноармейские КЕРАМБЛОКИ – высококачественные, пропаренные /стеновые, перегородочные/, **сухие** строительные **смеси.** Доставка. Т. 89033220052.

29.Опрыскиватели, окучники, косилки, грабли, погрузчики, доильные аппараты. **Распродажа!** Доставка! Т.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

30.Гравмассу, песок, щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

31.Гравмассу, песок, керамзит, кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

33.Кирпич рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

34.Гравмассу, песок, **щебень, керамблоки.** Доставка до 25 тн. Т.: 89176500385, 89603073399.

35.Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

37.Ворота, калитки, заборы, навесы. Ковка, **кровля,** обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 89022881447, 387574, metalservis21.ru

40.ПИЛОМАТЕИАЛ /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 89033891400.

41.Гравмассу, гравий, песок речной, карьерный; **щебень,** керамзит. Д-ка. Т. 89278404595.

42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

48.Керамблоки, бой кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

49.Керамблоки, цемент, керамзит в мешках – цены от производителя. Т. 89053447932.

58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

59.ТЕПЛИЦЫ от производителя. Низкие цены. Тел. 48-16-54.

74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные. Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

75.Дымоходные трубы из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

76.Срубы с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

79.ПРИЦЕПЫ трактора Т-25 и мотоблока. Т. 89053444735.

89.БЛОКИ керамзитобетонные от производителя. Высокое качество. Низкие цены. **Доставка.** Документы. Т. 89373866629.

93.Кирпич красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



95.ТРУБЫ ВИТЫЕ, офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 8-927-844-15-01.

120.ПЕНОПОЛИСТИРОЛ–ПЕНОПЛАСТ, теплоизоляционный материал. **НИЗКИЕ ЦЕНЫ.** ДОСТАВКА. Прием заказов по тел. 8-917-078-99-45.

123.Гравмассу, песок, навоз. Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

133.СЕТКУ–РАБИЦУ от производителя около 100 видов, сетку сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку, столбы.** Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

138.ОКНА, ДВЕРИ. Обшивка. Замер, доставка, демонтаж бесплатно. **Гарантия** 15л. Т. 89196624097.

141.СРУБЫ /6х3,4х3/ + **комплектация.** Тел. 8-937-396-91-01.

154.ОКНА и ПОТОЛКИ – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Пенсионерам скидки. Рассрочка. Т. 89176627164.

170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг. Т. 89033220479.

172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку. Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота и др. изделия от производителя. Т. 89276682828.

178.Гравмассу, песок, чернозём, бой кирпича, **щебень.** Пенсионерам – скидки. Т. 89176769379.

180.Отруби, зерно, к/корм, сахар, **муку.** Доставка. Т. 89373916016.

183.Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

188.Гравмассу, песок, щебень. Доставка. Т. 8-927-846-24-10.

205.Цемент, песок, гравмассу, щебень, **керамзит,** блоки. Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

211.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната 3х4, 3х6, 3х8, 3х10. В наличии. Доставка по ЧР. **Тел.: 48-08-23, 36-06-16.**

231.Ленточные **пилы по дереву.** Дисковые и рамные пилы. **Станки.** Т. 8-927-668-02-12.

241.Бетон, раствор, **ж/б изделия, пиломатериалы.** Д-ка по Чувашии. Т.: 89278535732, 89373918648.

251.МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦУ, профнастил, металлосайдинг, пластиковые **окна.** Доставка, замеры. **СТРОИТЕЛЬСТВО.** Т. 8-919-653-43-68.

270.Кольца колодезные 0,7м, 1м, 1,5м. Д-ка. Установка. Т.: 36-26-23, 8-903-379-77-68.

273.Месячных бычков по 8000 р. Доставка по ЧР. Т.: 89176641716, 89196690171.

284.Канашскую гравмассу, песок, щебень, грунт, навоз. Т. 8-909-302-09-58.

295.Песок, ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

296.ПЧЕЛОСЕМЬИ – 3800 руб. Т. 89613429059.

302.Кĕрхи çăм. Т. 89278515394.

322.ПЕСОК, щебень, гравмассу, керамзит. Доставка. Т. 89033220479.

333.ОПГС, песок, щебень. Доставка. Т. 8-905-341-71-75.

334.КОЛЬЦА от производителя – 0,7м; 0,5м; 1м. Т. 89030654056.

339.Песок, гравмассу, щебень, торф. Д-ка. Т. 8-905-341-91-46.

341. Пластиковые ОКНА и ДВЕРИ. Замер, доставка – **бесплатно.** Установка под ключ. Пенсионерам – скидки. Т. 89278447811.

358.Торф, навоз, ОПГС, песок /речной, карьерный/, щебень, керамзит, бой кирпича, чернозем, асф. крошку. Пенсионерам – скидки. Т. 89278680644.

360.Улья новые. Т. 89603091414.

361.АКЦИЯ! КОЛЬЦА железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. Т. 89603073151.

371.Семена ЛЮЦЕРНЫ /ГОСТ/ – **дешево.** Можно сеять до конца июля. Т. 89061363688.

ĔÇ РАБОТА

54.МОНОЛИТЧИКИ, КАМЕНЩИКИ – в Подмосковье. Т. 89176737773.

102.Требуются монолитчики – в Москву. Жильё, 3-разовое питание предоставляются. Оплата сдельная, в конце вахты – от 55-65 т.р. Т.: 8-937-013-48-95, 8-927-868-34-68.

297.Требуются каменщики, монолитчики в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

18.Бычков, тёлок, коров, лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

28.Вăкăр, ёне, **тына, сысна амисем.** Т. 8-927-999-37-37.

39.Коров, бычков и лошадей. Т. 8-960-310-98-78.

50.Коров. Т. 89278508564.

108.Тёлок, коров. Т. 8-937-014-49-97.

729.КРС – по высоким ценам. Т. 8-906-132-76-04.

ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Ялта пурăнакан 36 ç. каччă типтерлĕ хĕрпе е хĕрарăмпа паллашасшăн. Ача пурри чăрмав мар. Т. 8-906-382-36-56.

ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ ХЫПАР ИЗДАТЕЛЬСКИЙ ДОМ

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ
Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Кил-çурт, хушма хуçалăх".
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
56-15-30, 56-00-67.
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70,
56-20-07 – инспекторсем.
Факс: /8352/ 28-83-70.
Электронлă почта:
hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрацилене.

27.05.2015. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 15938. Заказ 1999.